30-41

Н. ЙЕВДОКИМĂВ

# БАÇНĂСЕМ

★

ЧĂВАШИЗДАТ • 1936

Н. ЙЕВДОКИМĂВ

# Б А Ç Ӈ Ă С Е М

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1936

Редактор **С. Эльгер.** Тех редактор **Н. Степанов.**

Послано в пр-во 15/I-36 г. Подписано к печати 11/IV-36 г.
Уп. Чувашлита № 1313. Заказ № 0118. Чувашгиз № 20.
Форм. б 62×94 $^{1}/_{32}$ Об'ем 1,5 печ. лист. Тир. 3000 экз.

Тип. № 1 Чувашгиза, г. Чебоксары, Канашская, 16.

# УМСĂМАХ

Совет илемлĕ литературинче баçңăлă (йуптарулă) жанр сахал сарăлнă. Ку тĕлĕшрен чăваш литературине уйрăмăн илсен те епĕр çакнах куратпăр. Баçнăсем пирĕн пĕр Н. Йевдокимăвпа М. Аттай çырнисенчен пуçне урăх çук та темеле.

Йевдокимăв баçнисем вĕсем пурте улт-çичĕ çул кайала çырнăскерсем. Çавăнпа та вăл баçңăсен тематики пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех уйрăм хуçалăхлă хресчен пурнăçĕнчи йăласемпе çыхăнса тăрат. Çак иртнĕ улт-çичĕ çул хушши пирĕн Совет çĕршывĕн хуçалăхĕпе куљтурлăхĕ халиччен курман утăмсемпе ўссе хăпарнă таппăр пулчĕ. Йалхуçалăхĕ коллективизациленни йал халăхĕ хушшинчи пĕтĕм çыхăнăва урăх йĕрке çине куçарчĕ, вăлах харпăрлăх йĕркине тĕпрен çĕмĕрсе тăкса, ĕçхресченĕсем хушшинчи капиталисăмла пурнăçран йулнă киревсĕр, йурăхсăр йăласемпе те çирĕппĕн кĕрешме тата вĕсене тĕппех пĕтерсе пыма пысăк майсем туса пачĕ. Ун пек йурăхсăр йăласенчен нумайăшĕ пĕтеççĕ те ĕнтĕ. Анчах пайанхи куна вĕсене йăлтах пĕтнĕ тесе калама ир-ха. Хăш-пĕр халччενех пĕтеймен сийенлĕ кивĕ йăла тавра-

шӗсем колхозла пурнӑҫра та нумай кансӗрлесе пыраҫҫӗ. Ахальтен мар Сталин йулташ та ун ҫинчен: «тӑн-пуҫ ӑнланӑвӗ пурнӑҫра пулнӑ лару-тӑрусенчен кайа йулса пыраť»—тенӗ. Ҫакна асра тытса, епӗр Йевдокимӑв баҫнисене, вӗсен тематики пайанхи куна пӗтӗмӗшпех ытамласа илеймест пулсан та, уйрӑм кӗнеке туса кӑларни усӑлӑ пулӗ тесе шутлатпӑр. Мӗншӗн тесен вӗсем пире капиталисӑм йӗркинчен, харпӑрлӑхлӑ пурнӑҫран тытӑнса йулнӑ киревсӗр йӑласемпе йурӑхсӑр кӑмӑлсене хирӗҫ кӗрешессинче пулӑшу пама пултараҫҫӗ.

---

# Ула сысна.

Ула сысна пĕрре ирхине
(Те хăйех уçнă хапхине)
Пахчана кĕрсе кайнă инкемек,—
Ахаљљине те мар, сатлинех.
Авă вăл, мăн кăмăллă хуçа пек,
Мăшлатса çӳрет пĕчченех.
Куљать тăвам терĕ пуљ çав сысна та.
Ирпе сатра лайăх, ĕнтĕ, чăнах та:
    Йăвăçсем çинче сарă кайăксем
    Ир ырлăхне мухтаса йурлаççĕ,
Айалта хĕрĕх те пĕр тĕслĕ чечексем
Ырă шăршă сарса тăраççĕ;
Ак хĕвел çутти те чалăшшăн
Сата пырса кĕчĕ, йăвашшăн.
Мĕнпур чĕрĕ чун савăнать:
Сатри те, сатра марри те,
Кăтра хурăнсен кăтра çулçи те
Пăшăлтатса калаçнăн туйăнать.
Пирĕн сысна кунта нумайах тăмарĕ,
Çаврăнчĕ те вити йеннеле утайрĕ.
    — Ну, Хвекла, йепле-ха?
Аван пуљ сатра? Тĕрлĕ чечек—умăнта,

Кайăк йурри... йепле ытарса тухрăн-ха?—
Терĕ йупах ўыха сыснана.
— Ей! Суйа! Ним ырри те çук унта!
Тесе хучĕ леш—ўыхана.

* * *

Кун пек Хвекласем пирте те сахал мар.
Ак хăшĕ:«—Мĕн ун советăн! тет.—Мĕн унта?
Ку начар, леш начар!..»—Хăй чăн та
Ула сыснаран кăшт та уйрăм мар.

---

## Хĕрлĕ ĕне.

Чейе вăл етем тени.
Анчах выљăхра та чейисем пур.
Авă Çемен пиччен хĕрлĕ ĕни
Ĕнесене ĕмме вĕреннĕ, мур;
Хирте курăк пĕтнĕ пек, хăйамат,
Кĕтўри ĕнесене кунĕ-кунĕпе
Тустарса çўрет вăл пĕтĕмпе.
Ĕнесем пурте пĕр ăслă мар:
Пĕри, парăнмасăр,
Хĕрлĕ ĕнене
Мăйракипе тĕксе йарат çилĕпе;
Тепри, пĕр хускanмасăр,
Канса çеç тăрат хăйне ĕмнипе.
Ăшă сĕтпе хĕрлĕ ĕне, инкемек,.
Йакалса карĕ çĕлен пек.
Курăк тавраш çийеймест вăл вуçех.
Анчах
Нумайа пымарĕ унăн мăнтăрлăх.
Акă сăмсалăх
Тăхăнтартса йачĕç хайхине,
Ахалљљине те мар—шăртлине.
Çак тăхăнтартнă шăртлă кăшăлпа
Вăл ĕнесен çывăхне те пыраймаст.

Курăк çиме хăнăхман, çавăнпа
Айри курăмпа та тăранаймасть.
Пирĕн хĕрлĕ ĕне çапла
Ыттисене ĕмейми пулчĕ;
Кайран вара
Тирĕпеле шăмми çеç йулчĕ.

* *
*

Васка пупа та сăмсалăх тăхăнтартрăмăр,
Çапла ăна курман куна кăтартрăмăр.
Пулас кунçулĕ иртрĕ ĕнтĕ пупăн.
Çавăнпа ак куçĕсем те путса ларчĕç унăн.

# Кӳршĕсем.

Кӳршĕпе кӳршĕн
Вăрçмали пулатех ĕнтĕ, ан кала!
Ма?—тейĕр тен,—мĕншĕн?
Чим-ха, итлĕр малала.
Пĕррехине,
Урхаҥ арăмĕ Урине
Сарнă йанă урлă çăварне:
Сан упăшку апла,
Сан упăшку капла...
Шуйтан! Çĕр çăтасшĕ!—
Çăва патне кайасшĕ!—
Тесе вăрçать вăл сикейсех
Хăйĕн кӳрши Микуҫ арăмне.
Çапла, хăш хĕрарăм вăрçма тапратсан
Итлеме çеç ан ӳркен!
Микуҫ арĕм те, калаçма тытăнсан,
Сăмахсăр аптраканниех мар иккен.
Лешне виттĕрлет кăна вăл сăмахпа.
Йал-йышсем:—Мĕн пулнă та, мĕн пулнă? тесе,
Унтан та кунтан кĕрлесе,
Шăв-шав патне чупаççĕ урампа.
— Ара! Есир мĕн йантăрататăр?—
Терĕ тĕлĕнсе Никантăр.

— Ула йытта есрел Микулĕ,—шуйттан,
Ухатара çухатса килчĕ!
Тесе хучĕ
Урхаҥ арăмĕ—куштан.
— Ей, тупнă тата есир калаçмали!—
Терĕ Чалăш тута Михали.
— Тупнă çав!—тет Урини.—Тупнă!
Вăрçса калаçмаллипех тупнă!
Пĕтерчĕ йытта... Ех, йыттăмçăм!
Етем ăслăччĕ вĕт, пассамçăм!
Урайне ача искĕртсен—
Çуласа типĕтсех илетчĕ,
Кипкесем те тасаччĕ,
Ех, йыттăм...
— Урай-кипке тасатма
Йыттин ăсĕ çитнĕ те,—
Хăйĕн çитеймен!—терĕ комсомолĕц Кириле.
Лешĕ, ăна илтрĕ те,
Уттара пачĕ килеле.

## Акахвунпа кăрмахвун.

Акахвун пупăн чиркӳне
Çынсем çӳреми пулчĕç кăчуне.
Праçникĕ тем пек «чаплă» пулсан та,
Чанне тем пекех çапсан та
Ваттисем анчах кĕлĕре,
Çамрăк-кĕрĕм нихçан çук.
Пуринчен ытла чиркӳре
Клирăс çинче никам çук.
— Ха,—тет пирĕн пуп.—Ĕç-и ку!?.
Йурлассине те йурла—ху,
Вулассине те вула,
Кадилне те хăвах сулла.
Çук, ĕç начар капла!
Чим, клирăс çине пĕрех хут
Кăрмахвуна лартас пуљ
Вăл кивĕ, суйаť те, пыраť пуљ!
— Пымасăр! Аťа йурлăпăр.
Суйсан та, пĕрле суйăпăр.
Епĕ хатĕр, атте Акахвун!—
Терĕ пупа кăрмахвун.

# Картара.

Ирхине, хуҫа пӳртрен тухиччен,
Ĕне сурăха кăлт! тапрĕ уринчен.
— Илтрĕн-и,—тет,—кĕҫĕр пӳртре мĕн турĕҫ?
Так ахалҍ вĕт, пĕр сăлтавсăр,
Усăсăр,
Ĕҫкĕ тунă. Ҫутăличчен шавларĕҫ.
Мĕн чул расхут тухмарĕ пулҍ унта!
Ес пыр—мăшкăлтăк шывĕ ҫеҫ умăнта.
Пирĕншĕн тесен
Чĕпкĕм ҫăнăх ҫук вĕсен!
— Ҫапла, ҫапла,—тет сурăх ĕнене.—
Манăн та мухтас килмест вĕсене.
Ăҫтан мухтас ун пек хуҫана?
Авă, пĕр кун, пуҫа ҫеҫ чикнĕччĕ ырҫана,
Ҫапрĕ те, мур, пилĕкрен,
Аран сĕтĕрĕнсе тухрăм кĕлетрен!
— Вăл мĕн, мĕ-ĕн!—тесе йачĕ ҫухăрса
Мăкла така, тислĕк тĕми ҫине тăрса.—
Картине пăхăр-ха есир, карти мĕнле?
Унтан та кунтан ҫил вĕрет,
Умран та хыҫран йур кĕрет,
Мĕнле пурăнмала кунта хĕлле?
Ав леш каҫ ҫĕр хута чĕтресе выртрăм:
Инкек, картарах пуҫăма шăнтрăм!

— Чăн, чăн, чăн! Чăн-чăнах!—
Тесе выртать сысни улăм айĕнче.
Çапла шавлаççĕ, кĕрлеççĕ аванах
Пирĕн хуçан сивĕ картинче.
— Капла пулмасть, чимĕр-ха, йулташсем!
Терĕ пĕри.—Ав хăй килет, хăйне калас!
— Калас, калас! Каламалипех калас!—
Тесе кăшкăрса йачĕç ыттисем.
Ак хуçа та çитсе кĕчĕ. Вăл сиввĕн
Пăхнипех хайхисем пирĕн
Кушак пекех йăпшăнчĕç,
Пĕри те уçаймасть çăварне.
А калассине?
Калассине ырана хăварчĕç.

* * *

Бўрократ пуçлăх çинчен те хăш чух
Çакăн пек шавлаççĕ,
Калассисем анчах
Ырана йулаççĕ.

## Чăпăркка.

Çулпала тулли лав пырат̆,
Чăпăркки лаша патĕнчех йавăнат̆:
Пĕрре лаша çурăмĕ тăрăх
Вырта᷈т̆ вăл чăсăлса,
Тепре хырăм айне кĕрет,
Йе турта тавра пĕтĕрнет.
Йе тата çул хĕррине çапăнса,
Кайри кустăрмапа йунашар
Çĕлен пек пырат̆ выљаса.
Такăр çулта чăпăрккана канлĕрех пулмала.
Акă лупашка урлă каçмала.
Анатала урапа хăйех анчĕ,
Хăпарнă чух тата тăпах чарăнчĕ.
Çитрĕ кунта мекĕрленме!
Ак тата! Каллех тапранчĕ!
Чăпăркки те пуçланчĕ йĕсĕрленме.
Те йурас тет вăл хуçана,
Ак тапратрĕ хĕртме лашана.

Çине-çинех
Çурăм çине!
Хырăм урлă—вирлĕ, вирлĕ!
Çурăм тăрăх тата кирлĕ!
— Нумай мар, нумай мар! на-на-на!-на!..
Кайала анас мар лупашкана.
— Вăт çапла! Ну-и лавĕ те нăк, мур!
— Ладнă хам пур,—
Кĕрсех ларнăччĕ вĕт шăтăка!
Тесе хучĕ вара чăпăркка.

# Пуш-уйăхпе ака-уйăхĕ.

Пуш-уйăхпе ака-уйăхĕ
Çуркунне пĕр-пĕрне тĕл пулчĕç.
Тăстан тухаť хăйсен сăмахĕ,—
Ĕнтĕ калаçма тытăнчĕç:
— Ара, есĕ мĕн хăтланан? Макăрмастăн-и?!
Терĕ ака уйăхĕ пуш уйăхне.
— Ех, тусăм,—тет леш, куççуль витĕр, йул-
ташне,—
— Варласа пĕтерчĕç вĕт мана, курмастăн-и?
Йалне пыр—йалĕнче тасалăх çук,
Хулине кĕр—унта та йĕркелĕх çук,
Ăçта ан çит—тислĕкпе пылчăк çăрăлаť!
Карташрен тухаканни те,
Урампа йухаканни те
Тăрна куç пек çур шывне варалаť.—
Пуш-уйăхĕ çапла калаçаť.
Хăй куççуль тăксах Атăл шывĕ май шăваť.
— Сыв пул! Сыв пул! тесе кăшкăрса
Уйăрăлса карĕ вăл тусĕнчен,
Ака-уйăхĕ, ăна ăсатса,
Ăшшăн çеç кулса йулчĕ хыçĕнчен.

---

# Ситти.

Улакуракăн йурри йаланах пĕр тĕрлĕ,—
Тенĕ сăмах йевĕрлĕ
Пирĕн Ситтин те (епир ăна кĕркунне
Суйласаччĕ хамăр йалпо лавкине)
Ăçта пынă унта пĕр сăмах:
— Ех тур! тет вăл,—шăшисем ĕрчеççĕ,
Лавкари тавара касса çисе çĕтеççĕ!
Тесе çӳрет вăл йаланах.
Шăши тенин ĕнтĕ, чăнах та,
Хĕрхенӳ-мĕнĕ çук нихçан та.
Таварĕ йӳнереххи пулаĭ-и,
Йе хаклинех кураĭ-и—
Вăл пурне те кăшлама пăхаĭ.
Пирĕн Ситти те пысăк арчине
Хаклă йышши таварсем пухаĭ.
Ăçтан илет-ши вăл вĕсене?
Кам пĕлет?
Пирĕн халăх шăшисенчен тĕлĕнет,
Капкăн илме те хатĕр çыннисем.
Кирлĕ мара шавлатăр, йулташсем!
Шăшисем çинче «арманĕ çеç авăраĭ»
Таварăра лавкаран Ситтийех шутараĭ!

# Пушарта.

Каç пулнă. Вăхăт чылай.
Сĕм тӳпере çăлтăрсем нумай.
Йалта кушак та çӳремест.
Шăп çеç, пĕр сас та илтĕнмест.
Халăх çывăрат вилнĕ пек.
Çак хушăрах, таçтан—
Муртан,
Сикрĕ тухрĕ пушар-инкемек!
(Инкек тени ĕнтĕ чăнах та
Курăнса килмест нихçан та).
Акă халăх тытăнчĕ пăлханма!
Ăçта пушар? Кам çунат? тесе,
Унтан та кунтан кĕрлесе,
Чупа-чупа тухаççĕ урама.
Пăхаççĕ: потребитĕл лавки пĕтĕмпех
Хупăрланнă хура тĕтĕмпе!
Аскăн çулăмĕ
Айĕн те çийĕн йавăнат,
Пушар сӳнтерме халăхĕ
Пĕр сементе пухăнат.
Анчах вутăн алли вăрăм, патне пыма çук,—
Лавка таварне кăларма пĕртте майĕ çук.
Чупкала çеç тăраççĕ çыннисем.
— Ех! теççĕ—ех! Хаклă таварсем!..

Так пӗтет халӑх пурлӑхӗ, так пӗтет!
Лавка заведушчи те хашкаса ҫитет.
— Ах!—тет вӑл.—Ах!—Сывлӑшне ҫавӑрса
йараймасть,
— Хам алсатуль,—тет,—лавкана йулнӑччӗ...
Пӗтрӗ! Пӗтрӗ! Иртнӗ ернере ҫеҫ илнӗччӗ!
Хӑйӗн куҫҫуль те кӑшт ҫеҫ тухаймасть.

---

## ПАВАН.

Пуç тăррипе—тӳпере,
Сывлăш тăрăх, ирĕкре,
Пĕр павaн вĕçсе пырать уласа.
Пĕрре аннă пек пулать вăл çĕреле,
Унтан каллех вăркăнать çӳлеле,—
Выљанса çеç вĕçсе пырать йарăнса.
Вĕçмелĕхех ĕнтĕ вăйĕ пур ун,
Сасси! хăйĕнчен те пысăк мурăн?
Çухăрать кăна мĕнпур таврана.
— Кам ку?—теççĕ.—Кам? Мĕн ĕçпеле-ши?
Мĕнле ĕçри килнĕ-ши?
Пурте куçпах курасшăн павaна.
Шăпчăк та йурламасть,
Куккук та шарламасть,
Шавласа ларакан вăрман та
Кашлама тăруках чарăнчĕ.
Ула лаша, паванне курман та,
Сассипелех лăштах такăнчĕ.
— Чим! Чим!—терĕ мăкла така кĕтӳре,
Итлĕр!—тет—мăн сасă пур тӳпере!—
Чарăлса кайнă хăйĕн куçĕсем.
Ĕнтĕ пăха пуçларĕç ыттисем.
— Ăçта? теççĕ.—Ăçта?
Пурте çӳлеле пăхаççĕ

Куçĕсемпе пăвана шыраççĕ.
— Ах, Пăван Иванч,—терĕ çерçи.—
Мĕнле-ха?
Хаљ ĕççи вăхăчĕ, пурте ĕçлесшĕн,—
Çитес хĕле туллипеле кĕресшĕн.
Есĕ тата мĕнле ĕçпе çӳрен-ха?
— Еп-и? тет пăван.—Манăн каймала.
Ав лапра йепле çуйăхаççĕ,
Лашапа кĕсре унта тапăçаççĕ;
Манăн çавсене чармала.
Пирĕн пăван çапла каласа
Вĕçе пачĕ каллах уласа.

* *
*

Чăнахах, кам пулать-ши ку пăван?
Кама пĕлтерет?—тейĕç хăшĕсем..
Пулаççĕ ун пеккисем.—Хуларан
Уссăр командировкăна тухнисем.

---

# Еçкĕре.

Каçпала, пĕрре,
Пирĕн кӳршĕре
Тем сăлтавпа ĕçкĕ тытăннă;
Сăлтавне мĕнне шыра-ха ĕнтĕ унта!
Ĕçкĕ ку, пуху мар, авă кунта
Çыннисем те чылайах пухăннă.
Калаçу, шавлу, йурлу—çак пӳртре.
Çав ĕнтĕ, пуçа кайсан, ĕçкĕре.
Хăнара пулсан, ма ĕçмесĕр йулас?
Телейе, кусен «çутти» те чылайах пулас:
Йалтах ӳсĕрĕлнĕ хăнасем,
Пĕри те йулман чăлт урри:
Тайкаланаççĕ, çапкаланаççĕ вĕсем.
Акă сĕтел хушшинче пĕри
Ни çывăрать,
Ни йурлать.
Ак вăранчĕ вăл, йăшăлтатма пуçларĕ,
Ак тăрать... тăчĕ те ланк! карĕ.
Татах тăрать... тăр-тăр-тăр-тăр!
Пĕтрĕ пуç! шăлтăр-шалтăр,
Кĕмсĕр-кемсĕр!
Сĕтелли тӳнчĕ,
Лампи сӳнчĕ;

Чашки-тирĕкки,
Сăмаварĕ
Урайнеле
Вĕçрĕ карĕ!...
— Вă-ăт мыскара!
Ех, еп ӳкернĕ пулсан кăна!
Мĕн кăтартнă пулĕччĕç вĕсем мана?
Рычакран пуçне ним те пулас çук урăх,—
Тесе хучĕ вара
Алăк панчи пӳтек амăшĕ—ват сурăх.

---

# Сурӑхсем.

Ҫулахи вӑрӑм кун каҫа сулӑнчӗ,
Хӗвел ҫӳлте мар, кӗтӳ те анчӗ.
Авӑ аслӑ хиртен выљӑхсем
Тусан кӑларса ҫеҫ, пӗтӗмпе,
Йала кӗрсе карӗҫ ушкӑнпе.
Чи малта—качакисем, сурӑхсем;
Пӗр-пӗринчен ирте-ирте чупаҫҫӗ.
Хыҫаларах тата ватӑ ӗнисем
Йарӑнтарса утса пыраҫҫӗ.
Пурте васкаҫҫӗ килеле.

Пӗр мӑн сурӑх ав, йулташсене йертнӗ те:
— Аӳӑр! тет—Аӳӑр, часрах чупар епир те,
Пурте киле ҫитетпӗр пӗрле.
— Аӳӑр!—теҫҫӗ лешсем те.—Ну, чупар!
Йутӑсене киле кӗртес мар!
Акӑ чупса карӗҫ васкаса.
Нумай та каймарӗҫ,—ҫырма леш йенне,
Уҫӑ хапха умне
Ҫитсе те тӑчӗҫ хашкаса.

— Ха-ха! тет пӗр путек.—Йутти пур, ан кӗртӗр!
— Йутти? Ӑҫта? Кунтах-и?

— Йутти мар, ман хăйматлăх вăл, кĕтĕр!—
Терĕ ăна хирĕç мăнраххи.
— Кĕтĕр еппин,—терĕç
Ытти сурăхсем те.

* *
*

Татнă канаша тăвайманнисем
Часах пулкалаççĕ хаљ каланă пек.
Астăвăр-ха, ак, çакăн майлисем
Хăвăр пурнăçра та пулман-и, тепле?

# Хăнасем.

Шартлама сивĕ хĕл кунĕ
Ваççукпа Кулђук Йаркунĕ
Шавласа пасартан килеççĕ.
— Ваççук!—тет Йаркунĕ кăшкăрса.—
— Ваççил Йакурч, пăх-ха, йалăмăр курăнмасť!
Чуптарар мар-и çак çулпа пăрăнса?
Манран çук, тӳрех çитесси пулмасť.
— Хăтусем патне пулђ? Аťа пăрăн-ха!
Тет леш,—кăшт ăшăнса тухăпăр.
Телейе, вĕсен сăри те пуртăр-ха,
Ăна та тутанса пăхăпăр.
— Тутанмасăр! тет Йаркунĕ.—Çитсен унта
Пурте пулĕ. Хайхисем чăн та
Йурттара пачĕç кӳршĕ йалăн çулĕпе.
Лаши те аван чупаť—Пĕр сементе
Çитес çĕре çитрĕç те.
Малтан вĕсем килĕн ватă хуçипе
Алă тытса паллашрĕç:—Хăта, сыви-ха?
Ватă старик пулатна?—Сывă-ха!
Хăвăр йепле?—Тăхлаччи?
Ачăрсем? Ват хăти?..
Калаçаççĕ, шавлаççĕ хăнасемпе.
Сăмахран сăмах тухса пыраť.
Сĕтел те тулаť çимĕçсемпе.
Умма сăра витри те пырса лараť.
Ĕнтĕ хуçа тытăнчĕ сĕнме сăрине.

Лешсем туйрӗҫ пулас сӑри мӗнлине:
  Куркине тытса ҫеҫ параҫҫӗ,
  Хӑйсем пӗр-пӗрин ҫине пӑхаҫҫӗ.
Ӗҫмен пирки, хуҫа пушшех сӗнет,
Пулӑшма тата арӑмне чӗнет.
— Амӗш,—тет—амӗш, кил-ха.
  Хӑнисене ӗҫтер-ха!
Ак хайхи! Иккӗн хистеме пуҫларӗҫ...
  Ӗҫмесен—хуҫана аванах мар,
  Ӗҫмешкӗн—сӑри йурӑхлах мар!
Пирӗн хӑнасем йӑлтах аптрарӗҫ.
— Хӑта, хӑта,—тет Йаркуне хуҫана,—
— Тавтапуҫ сумлӑ йашку ҫӑкӑрна!
Пире ӗнтӗ йӑлтах ҫитнӗччӗ,
Епир кайар-ха, килте арӑм чирлӗччӗ.
— Вилмест пуљ-ха, ан васкӑр, хӑтасем!
Ларӑр-ха ӗнтӗ, ларӑр ӗҫкелесе...
— Ҫук чирлӗ, йӑвӑр чирлӗччӗ, текелесе
  Аран тухса карӗҫ хайхисем.
Ну-и хӑта сан! Сӑрин пӑхма тӗсӗ ҫук,
  Ҫӑварӑнта тути ҫук!
Нумай ӑснӑ хӑй—тем ӗҫес пек...
Йепле ӗҫмеле унӑн йӳҫмен сӑрине!—
Терӗ вара Ваҫҫукӗ Йаркунне.

* *
*

  Ҫавӑн пек,
Пӗр кун сӑвӑ куртӑм пӗр журналта.
  Пӑхма хӑй сӑвӑ манерлех курӑнчӗ.
    Вуларӑм, вуларӑм та,—
Ҫав хӑта сӑри тутийех туйӑнчӗ.

# Армути.

Колхоз ыраш вырма тухнă,
Тырри лайăх, питĕ ăнса пулнă.
Кĕлтисем кăрман тăршшĕ пулаççĕ,
Сурат-çĕмелсем уй-хир талкишĕпе
Калама çук çăра ларса пыраççĕ.
Ун пек тырăпа кам хĕпĕртемест!
 Халăх пурлăхне курса
Çутçанталăк та мĕнпур сассипе
Хитре йуррине йурласа пĕтерейместь.
 Мĕншĕн хĕпĕртес мар?
  Хаљхи вăхăтра
  Ларан курăк та
Пĕр-пĕринпе савăнса калаçнăн туйăнаť.
  Анчах пурте мар:
Авă, армути тискерĕн çиленсе лараť.
— Пăх-ха ес! терĕ вăл çумри çĕмеле,
 — Пире мĕншĕн вырмаççĕ,
 Те йури курмĕш пулаççĕ?
 Пире те кĕлтене кĕртмеле!
Йаштака хăмăллă, пĕрчĕлĕ...
 Епир ырашран кайа-шим?
 — Чим, йулташăм,
Çаплине çапла пулĕ-те,—
Терĕ ăна хирĕç пĕр кĕлте.

Пĕтĕмпех апла мар.
  Чăнах та,
Аванах сирĕн хăмăлăрсем:
  Пĕр кăлтăксăр,
Мăкăнĕнни пек пĕрчĕрсем,
  Анчах çиме йурăхсăр.
Ыраш пулсан—выçă мар,
Тĕнче тутă пурăнаť,
Армутирен, етем мар,
Сыснийĕ те пăрăнаť.

* * *

— Ĕçĕмре хуť пĕр кăлтăк пулнă пулсан!
Нимсĕр колхозран кăларчĕç,—тет Ăртиван.
Хăй, тĕрĕс сăмахпа каласан,
Çак армутипе пĕр тăван.

———

## Шупашкар хӑнисем.

Курмил пичче, кӗрхи вӑхӑта пӑхмасӑр,
Карчӑкӗпе Шупашкара кайаҫ.
Ма кайаҫҫӗ-ши кусем?—тейӗр есӗр.
Ма пулаҫ-и, вӗсен унта ачи ырӑнта тӑраҫ.
Пӗчӗк ырӑнта та мар, аслинчех теҫҫӗ.
Шупашкар ҫыннисем те ӑна пӗлеҫҫӗ.
Ывӑлӗпе кинне курма,
Пите-питӗн тӑрса калаҫма
Васкаҫҫӗ акӑ пирӗн ват ҫынсем.
Ҫул тӑрӑх калаҫса ҫеҫ пыраҫҫӗ хӑйсем.
— Фу, ывӑнтӑм! Ҫитсенех канӑттӑмӑрччӗ,—
Тет йерипен старикӗ.
— Канма мар,—тет туйа тытнӑ карчӑкӗ,—
Унта ҫитсен пурте пулӗччӗ,
Ҫитесси туҫккӑ:—унта
Ашӗ-пӑшӗ, ҫӑмарти—пурте хамӑрта.
Ҫапла калаҫса, ҫак хӑнасем
Шупашкара ҫывхарса пыраҫҫӗ.
Ывӑннипе, мӗскӗнсем,
Тайкаланса ҫеҫ утаҫҫӗ.

Çапах та вĕсем хулана çитсе кĕчĕç.
Ывăлин хваттерне тупса,
Алăкĕ патне пырса тăчĕç.
— Прахвур! Прахвур!—
Тесе йачĕ кăшкăрса
Курмил пиччен ватă карчăкĕ.
— Чим, ан кăшкăр-ха, мур!—
Тесе тилмĕрет ăна хирĕç старикĕ.—
Хулара кунта йĕркеллĕрех пулмала,
Ав шăнкравне çеç туртмала.
Шăнкăрав сасси илтсе-и,
Йе тулти мĕлкесене сиссе-и,
Шалтан пĕр çепĕç майра васкаса тухрĕ,
Кĕтмен хăнисене курчĕ те
Вăл сиввĕн урамала пăхрĕ.
Сăмахне те калаĭ те—
Вырăсла чĕлхене ăнланмала мар.
— Кинĕ-и-ха ку? Начар куçпа палламала мар,—
Тесе пăхаĭ карчăк ун çине.
Кинĕн хăтланчăшсем,
Сăмахĕсем
Пĕртте кăмăла каймаççĕ хăйсене.
Вăл вĕсемпе нумай калаçса тăмарĕ,
Çаврăнчĕ те уттара пачĕ кайала;
— Аĭăр, кĕрĕр, килĕрех!

Тесе чĕннĕ сăмах та пулмарĕ.
— Командир, командир терĕ, тет
Курмил пиччен карчăкĕ,
— Елле, Прахвур командире тухнă-ши?
— Çук, тухман,—тет старикĕ,—
Командировка çеç кайнă тет.
— Хăçан килет-ши?
— Вăл хăçан килессине ĕнтĕ кам пĕлет.
Хырăм выçрĕ пит, кăлар-ха читнайна...
Ларса канар кăшт, пит ывăнтăм,—
Тет старик. Вĕсем пусма çинче ларнине
Еп хам та, иртсе кайнă чух, курсаттăм.

---

# ТАВĂРУ.

Йулташне вĕлернĕшĕн çиленсе,
Шăшисем хуçана тавăрма тăнă;
Çак ĕç пирки сăмах татас тесе,
Вĕсем пуху тунă.
Пĕлтерӳне вăхăтĕнче йанăран-и,
Йе кун йĕркинче пысăк ыйту тăнăран-и,
  Шăшисем харăсах пухăннă—
  Ампартан, лаçран, лупас айĕнчен,
  Картари кивĕ улăм ăшĕнчен
  Тата нӳхрепрен те пынă.
Анкартисенчен анчах йару çук,
Хыпар çитеймен пулас,—пĕлме çук.
  Уçăççĕ пухуне,
  Сăмах параççĕ пуçлăхне.
Докладçă сăмахне нумайа тăсай,
  Унтан пухура тавлашу тухай.
— Тавăрмала, тавăрмала! тесе
  Çуйăхаççĕ анчах çакăнта.
  Анчах мĕнпе тавăрмалине пĕлсе
  Тĕрĕс шухăш паракан пур-ши-ха унта?
Пĕри—пӳлме тĕпне шăтармала, тет;
Тепри—михĕ кăшламала, тет;
Хăшĕ—пӳртре сăтăр тумала, теççĕ;
  Тем те, тем те калаççĕ,

Тăвансем!—терĕ хăла шăши кăшкăрса:—
Епир кунта çакăн пек тулăксăр шавласа
Нихăçан та йĕркене кĕрейрес çук,
Хуçана тавăрма та пултарайас çук;
Ман шутпа ку ĕçе çапла тумала:
Хуçана тавăрма пĕрне кăна хушмала.
Епĕ сире тата ак çакна калăттăм:
Есир шансан, епĕ хам ку ĕçе тăвăттăм.
Ку паттăра чăнахах та шанчĕç,
Ĕçне тума срук вунă кун пачĕç.
Вунă кун иртейрĕ-и, те иртеймерĕ те,
Аслă пуху кайалах пухăнчĕ.
Васкаса çитрĕ хăла шăшийĕ те.
Пуху ăна итлеме тытăнчĕ.
— Епĕ, тет, хăла шăши лешсене,—
Хуçан тĕпсакайĕнчи тĕп мулне тупрăм.
Вара пуйанăн кивĕ укçисене
Веçех вакласа çăнăх турăм.
— Чим, чим!—терĕ пĕри пухуран.—
Патша укçи, вĕт, вăл! Ех, айван,
Кам çӳремен укçашăн макăрĕ?
— Тупата, уласах макăрчĕ!—
Тесе хучĕ
Ăна хирĕç хăла шăши паттăрăн.

# Мыскара.

Пĕрре ирхине,
Сахар арăмĕ Кулине
Турпас йăтма тухат урама.
— Тухин, вут хутма вăхăт çитнĕ пулђ,
Йе йашка пĕçерме шухăш тытнă пулђ,
Мĕне кирлĕ ун çинчен калаçма!—
Теме те пултарĕç
Хăшĕ-пĕри çакна хирĕç.
Çаплине çапла пулĕ те,
Чимх-ха,
Чим-ха,
Пĕр мыскара калам епĕ те.
Акă хайхи, пирĕн Кулине,
Турпас купи патне çитсе пырат,
Çитрĕ...ывçăн-ывçăн кăвайтне
Хăй çине иле-иле хурат.
Çĕклемне вăл те тултарайрĕ,
Те çук, унччен те пулмарĕ—
Тискер хайар сассипе
Кăшкăрса çеç йачĕ пĕтĕмпе.
Ак ĕнтĕ, мĕн пулчĕ те мĕн пулчĕ тесе,
Çынсем кунта чупаççĕ кĕрлесе.
Çамрăкки те, ватти те пур унта.
Çур йал пухăнчĕ пулђ çакăнта.

Пирĕн Кулине
Хăйĕн кĕпине
Хутласа тытнă кăкăр тĕлĕнчен;
Çăварĕ унăн çухăрат,
Куççулĕсем йухаççĕ.
Ним тулăкне тупма çук хăйĕнчен.
Мĕн пулнă кăна тесе çеç тăраççĕ
Мыскара курма пынă çыннисем.
Мĕн иккенне пĕри те туймаççĕ хăйсем.
— Ачасем, чимĕр-ха,
Пилĕкне салтса йарăр-ха,
Хĕвне шăши кĕмен-и?—терĕ
Кукăр Марукка Петĕрĕ.
Чăнах та, хай Кулинен пилĕкне
Пĕр самантрах йачĕç ак салтса.
Салтсанах, кĕтнĕ шăши вырăнне,
Тислĕк татки лап! тухса
Ӳкрĕ Кулине хĕвĕнчен.
Ех, Кулине йархананах!
Ним инкек çук хушăрах
Хăвăнне те,
Çынсенне те
Шартах сехре хăпартан!
Тăпăлђ çӳремеле сан!
Вăт ку—мыскара!—
Тесе хучĕ вара
Марук Петĕрĕ кулса.

—

## Тĕшмĕш Ваççук.

Хрулка пичче Ваççукĕ
Хĕр суйлама тытăннă.
Çак ĕçпеле мĕскĕнĕн
Йăлтах пуçĕ çаврăннă.
  Мĕн тăвас?
Халĕ, хĕрсем нумай чух,
Лайăххинех çаклатас.
Миких хĕрне илĕттĕм—
Сăмси пăртак пысăкрах,
Уншăнах та тăмастăп—
Тути хулăм, усăкрах.
Варук питĕ ăслă хĕр,
Ăна пурте пĕлеççĕ;
Анчах урлă урисем
Арăш-пирĕш утаççĕ.
Чипер хĕре Наçтука
Ман пек никам савайман,
Анчах вăл та найанпе
Тупра пĕртте пухайман.
Анаткасри Тăхтапин
Йапали те чылай тет,
Анчах ашшĕ, ват Пархин,
Хĕрне выљăх памасŤ, тет.
Малти касри Кăраçук

Куçран пăртак вăйсăр та,
Çавăх питех аптрас çук:
Унăн тупри виç арча—
Çурăлас пек лараççĕ,
Ăна ĕне, качака,
Ик-виç сурăх параççĕ.
Тумлă-сумлă çак хĕре
Йепле вара илес мар?
Йантă килен пурлăха
Йепле хапăл тăвас мар?
Ваççук пуйас шухăшпа
Илчĕ йачĕ Кăраçука;
Тупрĕ пурлăх, пĕр пуссăр,
Çакă пуйан арăмпа:
Кĕлет тулли йапала,
Карташ тулли выљăхсем.
Ваççук пăхаť лăпланма—
Усеççĕ ун ĕмĕтсем.
Ир пулаť те каç килет.
Çаплах кунсем иртеççĕ,
Кăраçукăн куçĕсем
Начарланса çитеççĕ.—
Куçри мăкăљ-макăлĕ
Аптăратаť мĕскĕне;
Хăйамачĕ пĕтерет
Курас куççен çуттине!
Уйра-пысăк ĕçре-и,
Пÿртре ал ĕç тăваť-и—
Кăраçук хĕнлĕн ахлатса
Çÿрет пĕр май хупланса.
Таçта-таçта айакка

Йумăçа та кайаççĕ,
Кусар тăрăх шăтăка
Вĕрнĕ шыв та йараççĕ.
Нимĕскер те пулăшмасť!
Кăраçук пулаť курайми...
Совет влаçĕ пулсан çеç
Пулницăна кайрĕç те,
Ваççук пĕлчĕ—арăмин
Трахом чирĕ пулнă-мĕн!
Тухтăр—пулмасť тесессĕн,
Ваççук, аптăранă йенне,
Тăкрĕ вĕри куççулне.
Тĕшмĕш Ваççук авланни
Вунă çул çеç тулсаччĕ,
Унăн «муллă» арăмĕ
Суккăр пулчĕ-хупланчĕ.
Сĕм пурăнаť Кăраçук—
Упăшкине хуйхăртса,
Халђ те пулин çав Ваççук
Çўрет ăна çаватса.

———

# Инкек.

Паԃук арӑмӗ—Уҫтине
Чан пек уҫӑ сассипе:
— Тпрукаԃ! тпрукаԃ! тенине
Часах илтрӗ хура ӗне.
Ӗни, му-ук! терӗ те,
Пӑлтӑр умне ҫитрӗ те,—
Паԃук пӳрчӗ алӑкне
Аран уҫса ӗлкӗрчӗ;
Атту пулсан, хура ӗне
Мӑйракипе хиреччӗ.
Ӗне пӳртре,—пӑрушне
Ҫулла-ҫулла ачашлаҭ,
Унтан алӑк кӗтесне—
Лаххан патне ҫаврӑнаҭ.
Паԃук арӑмӗ—Уҫтине
Пӗчӗкҫеҫҫӗ чӳлмекпе
Ӗни патне пыраҭчӗ...
Урай хӑми шарт!турӗ...
— Мӗншӗн-ха ку, пӗтрӗ пуҫ?!
— Паԃу-у-ук!
— Курмастӑн-им, ула куҫ,
Урай хӑми хуҫӑлнӑ....
Ҫитрӗ хура ӗнене
Мекӗрленсе ҫӗклеме:

Паҫук тытрĕ пуҫĕнчен,
Арăмĕ тытрĕ хӳринчен;
Ҫапах мĕскĕн хура ĕне
Анса кайрĕ сакайне!..
Кахал пирки урайне
Йĕпе тытса ҫĕртнĕшĕн
Паҫук хăйĕн арăмне
Хытă, хытă хĕнесшĕн.

* *
*

Хура ĕне вилнишĕн
Сут тăвасси пирĕн мар,
Анчах шăршлă лахханпа
Урай ҫĕртме кирлĕ мар.

---

# Лашапа завхоз.

Вăхăт чылай. Мал йенчен çуталса
Шурăмпуç килни курăнаť,
Пирĕн колхоз та васкаса
Каçхи ыйхăран вăранаť.
Авă ĕнесем сума арăмсем утрĕç витене
ушкăнпа,
Калаçаççĕ, шавлаççĕ хăйсем,
Йе кулса çеç йараççĕ сасăпа.
Акă хĕвел те мал йенче
Йăвашшăн пăхрĕ те йăл кулчĕ.
Шупка ту йенче, катара,
Варкăшса çеç выљаť сулхăн çил.
Иван, ак лашу, акă ил!—
Тенĕ сас пулчĕ картара.
Мĕншĕн-ши ку лаша Ивана?
Мĕн тăваťши ирех лашипе?
Çук! Ун пайан ирех хулана
Колхоз ĕçпе каймала.
Лаши те Иванăн пит хÿхĕм,
Чуппинче калăн вутхĕлхем,
Лайăх трантаснех кÿлчĕ Иван,
Пăхаť—лаша кÿлĕннĕ аван,
Сĕлĕ мăйĕх çыхрĕ хыçала.
Унччен те пулмарĕ

Таçтан çитсе йупах тыха
(Иванĕ ăна курмарĕ)
Çурчĕ йачĕ çак майăха.
Ак ĕнтĕ: сĕлли йухать,
Йупах тыхи пухать.
Иванĕ лашине: «тăр, çĕрçăташшĕ!»
Кăна курах карĕ завхозĕ
Тытăнчĕ вăрçма вăл тыхана.
Ех,—тет,—саламат çук, еп сана...
Уссу хăçан пулĕ, жулик,
Растратчик!..
— Ху пекех çав ĕнтĕ, тупата!—
Терĕ ăна хирĕç тыха та.

---

## ТУПМАЛИ

*Стр.*

Умсăмах . . . . . . . . . . 3
Ула сысна . . . . . . . . . . 5
Хĕрлĕ ĕне . . . . . . . . . . 7
Кӳршĕсем . . . . . . . . . . 9
Акахвунпа кăрмахвун . . . . . . . . . . 11
Картара . . . . . . . . . . 12
Чăпăркка . . . . . . . . . . 14
Пуш-уйăхпе ака-уйăхĕ . . . . . . . . . . 16
Ситти . . . . . . . . . . 17
Пушарта . . . . . . . . . . 18
Пăван . . . . . . . . . . 20
Ĕçкĕре . . . . . . . . . . 22
Сурăхсем . . . . . . . . . . 24
Хăнасем . . . . . . . . . . 26
Армути . . . . . . . . . . 28
Шупашкар хăнисем . . . . . . . . . . 30
Тавăру . . . . . . . . . . 33
Мыскара . . . . . . . . . . 35
Тĕшмĕш Ваççук . . . . . . . . . . 37
Инкек . . . . . . . . . . 40
Лашапа завхоз . . . . . . . . . . 42

Цена 75 коп.
Переплет 25 к.

Н. ЕВДОКИМОВ

★

# БАСНИ

на чувашском языке

ЧУВАШГИЗ ◆ 1936